Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

*46 (8210) №* ✻ *Юн кун, 2014 çулхи çĕртме (июнь) уйăхĕн 25-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*

## Республика кунĕ мероприятисемпе пуян

***Ĕнер официаллă майпа Республика кунне паллă турăмăр. Каçкӳлĕм республика тĕп хулин Хĕрлĕ лапамĕнче халăх пултарулăхĕн Пĕтĕм Раççейри XXII "Раççей çăл куçĕсем" фестивалĕн гала-концерчĕ иртрĕ, республикăра пурăнакансене Чăваш Республикин патшалăх уявĕпе – Республика кунĕпе – республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев саламларĕ. Уявпа çыхăннă мероприятисем вара Шупашкарта та, республикăн ытти хулисемпе районĕсенче те унччен чылай пулчĕç, уяв мероприятийĕсен календарĕнче вĕсем татах йышлă-ха, июнь уйăхĕ вĕçлениччен тăсăлаççĕ. Муркашсем те вĕсене активлă хутшăнаççĕ.***



Халăх пултарулăхĕн Пĕтĕм Раççейри "Раççей çăл куçĕсем" фестивалĕ июнĕн 23 – 24-мĕшĕсенче иртрĕ. Унта Раççейри 32 регионтан 39 коллектив хутшăнчĕ. Пултарулăх коллективĕсем Италирен, Азербайджанран, Китайран, Белоруссирен, Эстонирен те пулчĕç.

**Фестиваль шайĕнче июнĕн 21-мĕшĕнче пирĕн районта Китай Халăх Республикинчен килнĕ коллектив пулчĕ.** Сăмах май ют çĕр-шыв делегацийĕсем Муркаш тăрăхне килсе кайни пĕрремĕш мар. Иртнĕ çул кăна Муркашсем Украина представителĕсене икĕ хутчен йышăннăччĕ. Ку хутĕнче Китайри Гуйчжоу провинцийĕн юрăпа ташă коллективĕ Мăн Сĕнтĕрти информаципе культура центрĕнче питĕ пуян концерт программипе савăнтарчĕ. "Халăхсем хушшинчи туслăхăн чикĕ пулмалла мар. Пĕр-пĕрин чĕлхине пĕлменни туслă çыхăнусене аталантарма чăрмав кӳреймест. Малашне те килĕштерсе пурăнмалла пултăр",– палăртрĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев юрăпа ташă ушкăнĕпе пирĕн района килнĕ Гуйчжоу провинцийĕн ют çĕр-шыв ĕçĕсен канцелярийĕн пуçлăхĕн çумĕпе – ют çĕр-шывсемпе тытакан туслăх обществин вице-президенчĕпе Ван Янпа тĕл пулнă май.

* * *

**Июнĕн 24-мĕшĕнче, Республика кунĕнче, пĕтĕм чăвашсен тĕп уявĕ – иккĕмĕш Акатуй уявĕ иртрĕ.** Унта Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенчи тата чикĕ леш енчи çĕр-шывсенчи халăх пултарулăхĕн чăваш коллективĕсем, республикăри хуласемпе районсенчи пултарулăх ушкăнĕсем хутшăнчĕç. Пысăк пĕлтерĕшлĕ çак мероприятие хутшăнма районти "Муркаш" халăх фольклор ансамблĕ, ачасен ташă коллективĕ, ачасен Муркашри искусство шкулĕн "Гармония" вокал ансамблĕ тивĕçрĕç.

* * *

**Чăвашсен Акатуй уявĕ шайĕнче Шупашкар заливĕ хĕрринче чăвашсен наци ялне йĕркеленĕ.** Унта чăвашсен этнокультурине анлăн сăнланă. Чăвашсен авалхи йăли-йĕркипе кунта пирĕн районтан Чуманкассипе Йӳçкасси ял тăрăхĕсем паллаштарчĕç. Театрализациленĕ представленире республика çыннисемпе уяв хăнисене "Улах каçĕпе" паллашма интереслĕ пулчĕ.

Акатуй уявне Çатракасси ял тăрăхĕ те хутшăнчĕ. Вĕсем авалхи чăвашсен апат-çимĕçне, йăли-йĕркине сăнларĕç.

* * *

**Июнĕн 24-мĕшĕнче Комсомольски районĕнчи Ф. Хайртдинов хресчен (фермер) хуçалăхĕн территорийĕнче Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерстви, республикăн "Агро-Инновации" унитарлă хысна учрежденийĕ тата Комсомольски район администрацийĕ йĕркеленипе "Уй кунĕ – 2014" уçăлчĕ.** Уçă тӳпе айĕнчи куравра хальхи вăхăтра çĕр ĕçĕнче усă курмалли тĕрлĕ йышши çĕнĕ техника хатĕрне кăтартаççĕ тата вĕсемпе паллаштараççĕ.

Курав паян хăйĕн ĕçне вĕçлет. Унта Муркаш район делегацийĕ те хутшăнчĕ. Делегаци шутĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев, Ильич яч. хис., Суворов яч. хис., Е. Андреев яч. хис., Чкалов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕсен, "Путь Ильича" агрофирма представителĕсем пулчĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Мăн Сĕнтĕрти информаципе культура центрĕн сцени çинче – Китайри Гуйчжоу провинцийĕн пултарулăх коллективĕ.**

## Ăçта вĕренме каймалла?

Çамрăксене пĕлме

**Техникумсемпе колледжсене, аслă шкулсене вĕренме кĕрекенсенчен заявленисем илес тапхăр июнĕн 20-мĕшĕнче пуçланчĕ.**

Пирĕн республикăра хальхи вăхăтра профессин вăтам пĕлĕвне 27 професси патшалăх организацийĕнче, патшалăхăн мар 3 тата аслă шкулсен 2 филиалĕнче илме пулать. Ку çул бюджет вырăнĕсене 8 пин ытла абитуриент вĕренме кĕме пултарать, çакă иртнĕ çулхинчен 16 процент ытларах. Вĕренме кĕрекенсен ĕç хучĕсен пакечĕ çак документсенчен тăрать: заявлени, паспорт, аттестатăн оригиналĕ е копийĕ тата 4 сăн ӳкерчĕк. Хăш-пĕр вĕренӳ заведенийĕсенче пĕлӳ енне кура медицина справки те кирлĕ. Куçăмлă майпа вĕренме кĕрес текенсенчен заявленисене августăн 15-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Республикăри аслă шкулсене вĕренме кĕрес текенсем валли кăçал 3,5 пин бюджет вырăнĕ пурри паллă. Ку пĕлтĕрхинчен 6,6 процент ытларах. Заявленисем йышăнас тапхăр июлĕн 25-мĕшĕччен пырать. Специальноçсемпе тата вĕренме кĕмелли условисемпе аслă шкулсен сайчĕсенче паллашма пулать. Аса илтеретпĕр, абитуриент вĕренме кĕме харăсах 5 аслă шкул (виçĕ специальность таран) суйласа илме пултарать. Документсемпе пĕрле кăçал патшалăх пĕрлехи экзаменне тытни çинчен калакан свидетельство тăратмалла мар: вăл федерацин пĕрлехи базинче упранать. Пултарулăхпа çыхăннă специальноçсене суйласа илекенсен хушма конкурссене те хутшăнма тивĕ (аслă шкулсем хăйсем ирттереççĕ).

Выпускниксен хăш-пĕр категорийĕсем çăмăллăхсемпе усă курма пултараççĕ. Шкул ачисен Пĕтĕм Раççейри олимпиадин юлашки тапхăрĕн çĕнтерӳçисемпе призерĕсем тата тĕнче шайĕнчи предмет олимпиадисене хутшăннă Раççейĕн пĕрлештернĕ командисен членĕсем, вĕренме кĕме физкультурăпа спорт енне суйласа илнĕ Олимп, Паралимп тата Сурдлимп вăййисен призерĕсемпе чемпионĕсем аслă шкулсене экзаменсемсĕрех кĕме пултараççĕ.

Инвалид çамрăксем, 1 тата 2 ушкăн инваличĕсем, ачаран инвалидсем, çар суранне пула инвалид пулнисем, хĕсметре чирлесе кайнисем тата тăлăх ачасемпе ашшĕ-амăшĕн тимлĕхĕсĕр юлнă ачасем квотăпа палăртнă бюджет вырăнĕсенче вĕренме пултараççĕ.

Аслă шкулсене вĕренме кĕнĕ чух темиçе абитуриентăн пĕр пек балл пулсан ыттисенчен малтан тăлăх ачасене тата ашшĕ-амăшĕн тимлĕхĕсĕр юлнисене, инвалид ачасене тата 1, 2 ушкăн инваличĕсене, шалти ĕçсен органĕсенче вăй хурса пуç хунă сотрудниксен ачисене, уголовлă ĕç пурнăçлакан системăра, наркоконтроль службинче, пушара хирĕç кĕрешекен службăра ĕçлекенсен ачисене вĕренме илме ирĕк пур.

Çăмăллăхсемпе усă куракансен çак майпа пĕр аслă шкула тата пĕр специальноçпа кăна вĕренме кĕме юрать, ыттисене – пуринпе те пĕр пек условисемпе.

Физикăпа тата математикăпа патшалăх пĕрлехи экзаменĕсенче 70 тата ытларах балл пухнă, хамăр республикăри аслă шкулсене вĕренме кĕнĕ студентсене пĕрремĕш курсра Чăваш Республикин Пуçлăхĕн хушма стипендине – 2 пин тенкĕ тӳлеççĕ.

Июнĕн 27-мĕшĕ – Çамрăксен кунĕ

**ХИСЕПЛĔ ÇАМРĂКСЕМ!**

Сире çывхарса килекен Раççей çамрăкĕсен кунĕ ячĕпе чунчĕререн саламлатăп!

Çамрăклăх – кашни çыннăн пурнăçĕнчи чи илемлĕ те нихçан манăçми вăхăт. Çамрăк чухне пирĕнтен кашниех çутă шанчăкпа çунатланать. Ĕмĕт-тĕллевсем те сахал мар çак тапхăрта. Çĕнĕлĕхсене пурнăçа кĕртес, пысăк кăтартусем тăвас тесе çунатпăр. Çакна валли вăй-хăват та, кăмăл та çитет. Мĕн шутлани пурнăçа кĕресси вара йăлтах хамăртан килет. Паянхи çамрăксем çакна асра тытса пурăнасса шанас килет. Мĕншĕн тесен район пуласлăхĕ те, республика малашлăхĕ те, Раççей çирĕплĕхĕ те – йăлтах çамрăксен аллинче. Пирĕн çĕр-шывра çамрăксен политикин ыйтăвĕсене мала хураççĕ. Вĕренӳре, ĕçре пултаруллă çамрăксене хавхалантармалли мелсем хушăнсах пыни те çакнах çирĕплетет.

Эсир малашне те районăн социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕнче пысăк яваплăхпа вăй хурасса шансах тăратăп. Сывă пурнăç йĕрки, культура шайне, тавра курăма ӳстересси, спорта юратни паянхи çамрăксен кулленхи пурнăç йĕркин уйрăлми пайĕ пулса тăни савăнтарать. Малалла та пултаруллă та хастар пулăр.

Аслисен йăли-йĕркине тытса пырса, çĕнĕ шухăшăрсене пурнăçа кĕртсех пырăр. Пуçарулăхпа вăй-хăват сирĕн пĕрре те ан иксĕлтĕр. Çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тума сире çирĕп сывлăх, юрату, телей сунатăп. Ĕмĕтĕрсем çитсе пыччăр, шухăшлани пурнăçа кĕтĕр. Умăрти çулăр уçăлсах пытăр.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ**
**Р. ТИМОФЕЕВ.**

Республикăра

## Çурт-йĕр тăвасси анлăланать

Июнĕн 20-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Мускавра Раççей Федерацийĕн строительство тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министрĕпе Михаил Меньпе тĕл пулнă.

Михаил Игнатьев Михаил Мене Чăваш Енĕн строительство комплексĕн кăçалхи пилĕк уйăхри ĕçĕн итогĕсем çинчен каласа панă. Çавна палăртнă: пирĕн республика çĕр-шыври регионсем хушшинче пĕрремĕшсем шутĕнче патшалăхăн "Раççей çемйи валли пурăнмалли çурт-йĕр" программин участникĕ пулса тăнă. Асăннă программа шайĕнче республика территорийĕнче 2017 çул вĕçлениччен эконом креслă 210 пин тăваткал метр пурăнмалли çурт-йĕр хута ярĕç.

Тĕл пулу вăхăтĕнче Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерессин, çавăн пекех Чăваш Республикинче федерацин 2011 – 2017 çулсем валли палăртнă "Таса шыв" тĕллевлĕ программине пурнăçа кĕртессин ыйтăвĕсене сӳтсе явнă.

Хальхи вăхăтра Раççей Президенчĕн вăрçă участникĕсене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерессе пирки йышăннă указне пурнăçласа Чăваш Енре 5751 ветеран хăйĕн пурăнмалли çурт-йĕр условине лайăхлатнă. Ку ĕç малалла пырать.

Федерацин "Таса шыв" программине пурнăçа кĕртме 2011 – 2013 çулсенче республикăна федераци бюджетĕнчен 945,6 млн. тенкĕ уйăрнă.

Михаил Мень Чăваш Ен строительство комплексĕн ĕçне лайăх енчен палăртнă.

Районта

## Çамрăксен уявĕ

Июнĕн 27-мĕшĕнче Раççейри çамрăксен кунне Муркашра та савăнăçлă лару-тăрура уявлама палăртаççĕ.

Район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх уяв 18 сехетре "Сывлăх" физкультурăпа спорт комплексĕ умĕнче хаваслă ташă-юрăран пуçланать. Тепĕр сехетрен уявра районти ертӳçĕсен салам сăмахĕсемпе пĕрлех ĕçре хастар çамрăксене, тĕрлĕ конкурссемпе олимпиада çĕнтерӳçисене Хисеп татаТав хучĕсем парса чыслĕç.

Ди-джейсен конкурсне, 2014 çулта шкултан вĕренсе тухакан чи килĕшӳллĕ яшпа хĕре суйлассине, уяв вăхăтĕнчи сăн ӳкерчĕксене тӳрех пысăк экран çинче кăтартассине, кĕлетке çине ӳкерессине тата ытти конкурс ирттерме пăхса хунă. Шкул форми Совет саманинчен пуçласа паянхи кунччен мĕнле улшăнса пынине те çак уяврах курма пулĕ. Уяв çĕрлеччен тăсăлакан ташă каçĕпе вĕçленет. Çитсе курма тăрăшăр.

**Н. ДИМИТРИЕВА.**

Çырăнтару – 2014

## Кĕркуннепе хĕлле хаçатсăр кичем

**Хаклă вулакансем, вăхăт пачах юлмарĕ. "Çĕнтерӳ ялавне" июль уйăхĕнчен илсе тăма çак кунсенче çырăнăр. Кĕркуннепе хĕлле хаçатсăр кичем.**

Республика кунĕ

# Татьяна – чи пултарулли



Çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче Республика кунне уявларăмăр. Çавна май иртнĕ эрнере Шупашкарта "Раççей регионĕсем – тăнăç аталану" VII экономика форумĕ ĕçлерĕ. Унăн тытăмĕнче "Хуласемпе ытти территорисене социаллă çыхăнура аталантарасси" ирттернĕ мастер-класра нумай функциллĕ центрсен ĕçченĕсене чысларĕç. Çавна валли республикăра çулсерен иртерекен "Чăваш Республикин нумай функциллĕ центрсен чи лайăх ĕçченĕ" республика конкурсне пĕтĕмлетрĕç.

Калама кăмăллă, "Профессионалсем" номинацире патшалăх тата муниципалитет услугисем парассипе ĕçлекен Муркашри нумай функциллĕ центр специалисчĕ Татьяна Юрьевна Мясникова **(сăн ӳкерчĕкре варринчи)** çĕнтернине палăртрĕç.

Нумай функциллĕ центрсен ĕçченĕсем хушшинче палăрнă пирĕн юлташ асăннă учреждени аталанăвне пысăк тӳпе хывнине палăртмалла. Чăваш Республикипе ĕçлекен Росреестр Управленийĕн ĕç опычĕ çине таянса вăл ĕç йĕркелĕвне тивĕçлĕ шая лартрĕ. Муниципалитет услугисене "пĕр чӳрече" тытăмĕпе район администрацийĕн пайĕсем хушшинче çыхăнтарчĕ, информаци системине автоматизацилессине алла илчĕ, гражданенчен пĕрремĕш документсем йышăнма пуçларĕ.

Паян МФЦ тăнăç аталанса пырать. Çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне кунта гражданенчен пĕтĕмпе 2249 документ йышăннă. Вăл шутран федераци услугисемпе – 1383, республика услугисемпе – 121, муниципалитет услугисемпе – 745. Çак хушăра асăннă учреждени 718 консультаци панă.

Татьяна Юрьевна ял библиотекин 15 ĕçченне патшалăх услугисем парассине "пĕр чӳрече" тытăмĕпе йĕркелеме вĕрентрĕ. Çакăн хыççăн районти библиотекăсем пĕтĕмпе 111 ĕç йышăннă, 564 консультаци панă.

Конкурс çĕнтерӳçи хăйĕн пĕлĕвне ӳстерессипе тăтăшах ырă шывра пулни çĕнĕ ӳсĕмсене никĕслессе шанатпăр.

**Т. КОРОЛЬКОВА,**
**районти нумай функциллĕ центр директорĕ.**

"Симĕс ĕç çи" маршрутĕсемпе

# Вăхăтпа туллин усă курăççĕ



***Чкалов ячĕпе тата Чапаев ячĕпе хисепленекен пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем кăçал пĕр йышра ĕçлеме пуçларĕç. Çакă вара кашнин яваплăхне ӳстерчĕ. Äна ăнланакансем вырăх апачĕ хатĕрлес тапхăрта та малашлăха шанса, ответлăха туйса ĕçе тухаççĕ. Владимир Никифоров механизатор (сăн ӳкерчĕкре) – çавăн пеккисенчен пĕри. Хăйне шанса панă МТЗ-82 трактора юсавлă тытса хастар механизатор унпа кашни кун ут çире.***

***– Çу кунĕсемпе туллин усă курни хĕлле ума тухĕ. Вырăх апачĕ çителĕклĕ пулсан хуçалăх экономики те тĕреклĕ пулĕ, – трактор кабинине кĕрсе ларнă май каласрĕ 30 çул ытла тракторпа ĕçлекен Владимир.***

***Козлятникран хатĕрленĕ утă рулонĕсем паян йăлтах фермăра.***

***– Икĕ хуçалăх ĕçченĕсем те паян çитес хĕл кунĕсем пирки шутласа ĕçе тухни тата мал ĕмĕтпе вăй хуни аталану çулни уçасса шанатпăр. Ыранхи кунпа пурăнмасан паян майĕ те çук, – терĕ пĕрлешӳтернĕ хуçалăхсене ертсе пыракан П. Ефимов.***



***Хуçалăх ĕçченĕсем ут çи кунĕсемпе туллин усă курни ырă шухăшсем çуратать.***

***А. БЕЛОВ***
***сăн ӳкерчĕкĕ.***

«Симĕс ĕç çири» пушар хăрушсăрлăхĕшĕн

# Янтă утăна упрар



***Иртнĕ кунсенче районти пушар надзорĕн уйрăмне Константин КОСАЧЕВ (сăн ӳкерчĕкре) ертсе пыма пуçларĕ. Çĕнĕ ертӳçĕн тĕп тĕллевĕ – пушар хăрушсăрлăхĕпе районта тивĕçлĕ йĕрке тăвасси. Çак ĕçре вăл хăйĕн пĕтĕм опычĕпе тата пĕлĕвĕпе туллин усă курма шантарать. Районти çĕр ĕçченĕ паян «симĕс ĕç çире» вăй хунине тата çак тапхăр хуçалăхсен экономикине тĕреклетмелли никĕсе йĕркелемелли вăхăт пулнине ăнланса Константин Юрьевич паян «симĕс ĕç çири» пушар хăрушсăрлăхĕ пирки калаçма кăмăл турĕ:***

– Калаçăва чĕннĕшĕн тавах. Çу кунĕсем – малашлăха пăхмалли вăхăт. Алă усса ларманнисем паян çитес хĕл валли ытлă-çитлĕ вырăх апачĕ янтăлама пултараççĕ. Вĕсем çак вăхăтра çителĕклĕ усă кураççĕ те. Анчах хирте ĕçленипе пĕрлех хăрушсăрлăх ыйтăвне те иккĕмĕш вырăна хăварас марччĕ. Ахальлĕн ыйхă вĕçтерсе ĕçлени самантрах кĕл пулса çилпе вĕçме пултарать. Асăрхарăр пулĕ, манăн сăмах пушар хăрушсăрлăхĕпе çыхăннă.

Районти ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче тата килти хушма хуçалăхсенче паян çитес хĕл валли вырăх апачĕ хатĕрлессипе ĕçсем анлă пыраççĕ. Хресчен ыранхи кун пирки шутланине ырлатăп кăна, анчах çак тапхăрта пушар хăрушсăрлăхĕ пирки манмасан çеç тăрăшуллă ĕçпе ыранхи кун татах та тулăхрах пуласси пирки те иккĕленӳ çук. Çĕр ĕçченĕн çак ответлă тапхăрĕнче "хĕрлĕ автан" вăйилсе сиен кӳресрен кашниĕнех асăрханмалла: хирте те, килте те, тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсенче те.

Ут çи – халăхпа техника ĕçе массăллă явăçнă тапхăр, ыранхи куна пăхса ĕçлемелли вăхăт. Кунта пушар хăрушсăрлăхĕ малти вырăнта пулмалли пирки калама та кирлĕ мар пек ĕнтĕ, анчах...

Районта ут çи çулленех пушар тухаслăхпа пуян. Тимлĕхе самантлăха çухатни вырăшар тонна типĕтсе янтăланă утă-улăма кĕл тăвать, хаклă та паха техникăна юрăхсăра кăларать. Çынсем самантлăха тимлĕхе çухатнипе пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче те, уйрăм çынсен килĕсенче те утă хранилищисемпе вырăх сарайĕсем, утă капанĕсем, ĕç тăвакан техника нумай çунса кĕлленет. Çакна шута илсе тата ял ĕçченĕн хальхи хĕрӳ ĕç çийĕ вут-кăвар алхаснипе ан "çуталтăр" тесе пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче çак ĕçсене кун йĕркине кĕртсе кая хăвармасăр пурнăçлама ыйтатăп:

1. Вырăх апачĕ хатĕрлекен тата упракан, ГСМ склачĕсене, машинăпа трактор паркĕсене, витаминлă курăк çăнăхĕ тунине тата упранине пушар хăрушсăрлăх тĕлĕшпе комиссипе пăхса тухмалла. Çав вырăнсенче шыв, пушар сӳнтермелли пирвайхи хатĕрсем, çыхăну, пушар çинчен сасă парса пĕлтермелли устройствăсем пулмалла.

2. Вырăх апачĕ хатĕрлеме хутшăнакан ĕçченсене, механизаторсемпе водительсене ĕç çинчи пушар хăрушсăрлăхĕн правилисемпе паллаштарса ятарлă журналта алă пустармалла.

3. Утă капанĕсене е утă рулонĕсем упранакан вырăнсене электричество линийĕсенчен 15 метртан, çул хĕрринчен 20 метртан, çуртсенчен 50 метртан кая мар вырнаçтармалла.

4. Утă çине хутшăнакан техникăна "хĕрлĕ автанпа" кĕрешмелли пирвайхи хатĕрсемпе тата хĕм сӳнтермелли устройствăсемпе çителĕклĕ комплектламалла.

Халĕ калана ĕç йĕрки пустуй сăмах мар. Вĕсене пурнăçран илнĕ. Йĕркене пăхăнманнисемпе вара çивĕч калаçу пулĕ. Кайран тесен ĕç çинчи хăрушсăрлăхшăн тăрăшса çак ансат правилăсене пурин те пурнăçламалла. Унпа пĕрлех çак хĕрӳ вăхăтра ведомство тата ирĕклĕ пушар хурал ĕçченĕсен служби не специалистсемпе вăйлатмалла. Пушар сӳнтерме пăхнă техникăна çителĕклĕ бензинпа, кирлĕ чухлĕ шывпа тытмалла, юсавсăр пушар машинисене хатĕррисен ретне тăратассипе маларахах тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

Пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнса вăхăтра тата çителĕклĕ хатĕрленĕ вырăх апачĕ çитес хĕл кунĕсенче хуçалăх производствине пĕр хавшатмасăр тытса пыма пулăшĕ.

Пушар хăрушсăрлăхĕпе паян туса ирттернĕ ĕç çывхаракан хĕл вырмара та ытлашши пулмасса шанатăп.

Пахчаçă кĕтесĕ

# Тухăçшăн паян тимлемелле

Пахчара ăшша юратакан пахча çимĕç калчине маларах хатĕрленĕ усă йăрансем çине куçарса лартнăранпа вăхăт самаях иртрĕ. Иртнĕ кунсенчи çумăрлă çанталăк вĕсене вăй илсе ӳсме лайăх тĕкĕ пулчĕ. Çу уйăхĕнче акса хăварнă çимĕç калчи те юлашки вăхăтри нӳрĕпе ăнса ӳссе кайрĕ. Манмалли çук, агротехника ĕçĕсене вăхăтра туса пырсан кăна пахча хăйĕн хуçине пуян тухăçпа савăнтарасса кĕтме пулать. Çавăнпа та акнă-лартнă калчана тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстерессишĕн кил хуçин паян тимлемелле.

Пахча çимĕç лайăх тухăçпа савăнтартăр тесен ӳсен-тăран тĕммисене ӳссе аталанма пур условие те вăхăтра туса памалла. Халĕ, сăмахран, кишĕрпе петрушка, кăшманпа çарăк йăранĕсене çумласа сайралатмалла. Сайралатнă хыççăн калчана шăварнипе пĕрлех ретсем хушшине кăпкалатассине те манăçа хăвармалла мар. Çак ĕçсене каç енне, хĕвел анса ларас умĕн пурнăçласан аванрах. Äшă кунсенче йăрансене çумран таса тытасси пирки те манмалла мар. Çакă та пулас тухăçăн пĕр пайĕ пулса тăрать.

Купăстана, çарăка, редисопа хăяра т. ыт. те курăк пыйти (тля) кăмăллать. Унпа тулăх кĕрешме сиенлĕ им-çамсем вырăнне пахча çимĕç калчине кĕл шывĕпе шăварни пулăшать. Шĕвеке хатĕрлеме 10 литр шыв çине пĕр стакан йывăç кĕлĕ хушмалла та лайăх пăтратса ирчен лартмалла. Ирпе тепре пăтратса илмелле те сăрăхтарнă хыççăн йăрансене сирпĕтмелле.

Купăстапа кишĕре, сухана тата ытти пахча çимĕçе сиенлĕ хурт-кăпшанкăсенчен хӳтĕлеме "Алатар" препарат пысăк пулăшу парать. 5 миллилитр препарата 5 литр шывпа лайăх хуташтармалла та ӳсен-тăран çине ирхине е каçхине сирпĕтмелле.

Хăярпа помидора тĕрĕс-тĕкел аталанма тата нумайрах çимĕç туса илме "Завязь" препаратпа усă курни вырăнлă. Помидор ӳснĕ вăхăтра ăна уйрăмах тĕрлĕ чир-чĕртен хӳтĕлемелле. Фитофторозран сыхланма помидор тĕммисене "Фитоспорин-М" биофунгицидпа е ешĕл сенкер хушнă ытти препаратсен ирĕлчĕкĕпе имçамлани пысăк пулăшу пулать.

Ял çыннин çак вăхăтра "иккĕмĕш çăкăр" пирки те манмалла мар. Çумлана çĕр улмине колорадо нăрринчен хӳтĕлеме "Искра", "Танрек" тата ытти инсектицидсем лайăх пулăшаççĕ.

Сăмахăма вĕçленĕ май вулавçăсене тепĕр хут çакна аса илтеретĕп. Пахча çимĕç калчине сиенлĕ хурт-кăпшанкăпа тĕрлĕ чир-чĕртен хӳтĕлемелли им-çамсемпе ирхи-каçхи вăхăтра тата уяр çанталăкра усă курни вырăнлăрах. Кун пек чухне вĕсен эффективлăхĕ пысăк.

Аса илтереме. Пахчара наркăмăшлă препаратсемпе усă курнă вăхăтра хăрушсăрлăх техникине çирĕп пăхăнмалла. Унсăрăн сывлăхшăн пысăк сиен пулĕ.

Йĕркене пăхăнсан тата пысăк тухăçшăн паянах ытлă-çитлĕ тимлесен кĕр кунĕсен çитсен çирĕп нӳхреп пушă пулмĕ.

**Пурне те ăнăçу сунса А. ШАРИКОВ**
**пахчаçă.**

Тереç ялĕ.

# Вĕсем кашниех ыр ятлă

Иртен пуçласа каçчен ĕçре ирттерекеншĕн вăхăт иртни сисĕнмест. Хуçалăхсем хушшинчи "Моргаушская" строительство организацийĕ те кăçал 55 çул тултарчĕ. Раççей Федерацийĕпе Чăваш Республикин тата районăн ĕç планĕсене палăртнă вăхăтра пурнăçлассишĕн вăй хурать коллектив. Кунта ĕçлекенсем, ытларах çамрăксем пулин те, аслисен ĕç йĕркине çирĕп алăра тытса пыни курăнать – уйрăмах пуçланă ĕçсене кĕске вăхăтра тата пахалăхлă пурнăçлассипе. Çакă вăл кунти çамрăксем малашлăха пăхса аслă юлташĕсен ĕç опытне туллин алла илни пирки калать.

– Хамăр пуçăннă ĕç йĕрки çамрăксен аллинче те пурнăç уттинчен тăрса юлманни савăнтарать. Эпир вĕсем пурнăçланă ĕçсене пăхса паян организаци аталанăвĕшĕн хĕпĕртетпĕр. Çĕнĕрен çĕкленекен нумай хваттерлĕ çуртсене çамрăксем суйлани, çуртсен кил хушшийĕсенче ачапăча сасси янăрани районăн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕ малалла утнине çирĕплетет, – терĕ ĕçтешĕсем çине пăхса асăннă организацире 38 çул штукатур-малярта тата çак ĕçченсен бригадирĕнче ĕçленĕ Венера Золототрубова **(сăн ўкерчĕкре сулахайран 3-мĕшĕ)**. Унăн ĕçтешĕсем (сулахайран сылтăмалла) Т. Миронова (каменщицăра чылай ĕçленĕ), А. Васюхина экономист, Т. Тимофеева штукатур-маляр (ĕç стажĕ 37 çул, паян та кулленех ĕçре), М. Романова штукатур-маляр (кăçал тивĕçлĕ канăва кайрĕ), Л. Хошкина каменщица (ĕç стажĕ 38 çул, паян та кулленех ĕçре) Венера Анатольевна сăмахĕпе килĕшнине пĕлтерчĕç.

**Районăн ĕçчен çыннисем**



"Моргаушская" МСО çĕкленĕ çуртсем паян района илем кĕртеççĕ. Строительсен алли юсаса хăт кĕртнĕ çуртсем çине район çыннисем тата Муркаш хăнисем ытараймасăр пăхаççĕ.

**А. БЕЛОВ сăн ўкерчĕкĕ.**

## Объявления

**Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 39-68.**

**Консалтинговая компания «ВИКТОРИЯ»**
- Представительство интересов в судах;
- Подготовка исков, договоров, жалоб;
- Сделки с недвижимостью, в т.ч. с земельными участками;
- Риэлторские услуги (покупка, продажа, аренда);
- Услуги по оценке недвижимости;
- Взыскание по КАСКО, ОСАГО;
- Регистрация, ликвидация организаций, ИП;
- Бухгалтерский и кадровый учет.

Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119
Тел.: 62-4-43, сот. 8-903-358-64-48
г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4а. Тел. 44-64-48
сайт: www.victoria-ooo.ru

**ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ: 25х100; 25х110; 25х120; 25х130; 25х150; 25х200; 50х120; 50х150; 50х180; 50х200. БРУСЬЯ: 100х100; 100х150; 100х200; 150х150; 150х200. БЛОКИ, КИРПИЧИ, ЦЕМЕНТ. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 1-11.**

**ПРОДАЮ ГРАВМАССУ, ПЕСОК, КЕРАМЗИТ, БЛОКИ, КИРПИЧ. Тел.: 8-905-199-69-33. 16-27.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел.: 8-927-667-40-92.** 11-22.

**ПРОДАЮ ПЧЕЛОСЕМЬИ, ПЧЕЛОПАКЕТЫ И МЕД. Тел.: 8-908-309-66-75. 7-10.**

**Провести лето вместе с КПК «Содружество» - это удобно и выгодно!**

**ЗАЙМЫ**
- *на строительство, ремонт и благоустройство,*
- *на подготовку к школе,*
- *на покупку бытовой техники, мебели,*
- *на отдых и просто на мечту.*

для пайщиков кооператива

**Кредитный потребительский кооператив "Содружество"**
с.Моргауши, ул.50 лет Октября, 23
**62-6-86, 8 900 333 0001**

кредитный потребительский кооператив граждан «КапиталЛ»
КапиталЛ
www.kapital-21.ru
*Поможем и приумножим!*
**ПРИНИМАЕМ СБЕРЕЖЕНИЯ**
Личные сбережения застрахованы ЗАО АСК «Инвестстрах»
**29% Выгодный вид сбережений** от 50 000 до 700 000 руб., от 6 месяцев до 3 лет*
**ВЫДАЕМ ЗАЙМЫ ОТ 2,2% ****
Процентная ставка по сбережениям от 6 % до 33 % годовых в зависимости от срока договора. Срок заключения договора от 1 до 36 месяцев. Выплата % производится ежемесячно либо по окончании срока действия договора. Принимаем сбережения от 5 000 руб. до 1 000 000 руб. *Данный вид сбережений доступен каждому члену КПКГ "КапиталЛ". При досрочном расторжении договора процентная ставка рассчитывается по программе "До востребования", 6% годовых. **Процентная ставка по займам составляет от 2,2% до 2,7% (от 52,8% до 64,8% годовых) от 10 000 до 500 000 руб. в зависимости от вида займа. Процентные ставки указаны за 2 недели пользования займами. Для вступления в КПКГ "КапиталЛ" необходимо оплатить вступительный взнос - 50 руб., обязательный паевой взнос - 200 руб. (при выходе из кооператива сумма обязательного паевого взноса пайщику возвращается. Услуги предоставляются только пайщикам кооператива).
**с. Моргауши, ул. Мира, 5а**
**8-800-700-59-52**
**49-59-52**
КПКГ «КапиталЛ» является членом некоммерческого партнерства «Саморегулируемая организация кредитных потребительских кооперативов «Союзмикрофинанс» ОГРН 1132130001222 КПКГ "КапиталЛ" только для членов кооператива, подробности по телефонам.

**Организация реализует: песок речной, гравмассу (ОПГС), щебень различных фракций. Без посредников. Низкие цены. Шешкарская пристань, Моргаушский район. Тел.: 8-927-995-07-51, 8-937-384-06-50. 18-19.**

## Прогноз погоды

| | среда 25 июня | | | | четверг 26 июня | | | | пятница 27 июня | | | | суббота 28 июня | | | | воскресенье 29 июня | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | **+12** | **+15** | **+17** | **+15** | **+11** | **+14** | **+13** | **+11** | **+8** | **+12** | **+13** | **+11** | **+11** | **+15** | **+19** | **+15** | **+10** | **+8** | **+8** |
| Давление мм | 741 | 741 | 741 | 740 | 740 | 741 | 744 | 746 | 746 | 746 | 744 | 741 | 736 | **733** | **732** | **732** | **733** | 737 | 742 |
| Влажность % | **91** | 66 | 51 | 71 | 88 | 66 | 55 | 69 | 87 | 63 | 65 | **97** | **100** | **96** | 63 | **92** | **99** | **93** | 88 |
| Ветер м/с | 4 | 6 | 7 | 3 | 4 | 7 | 7 | 3 | 2 | 1 | 3 | 6 | 4 | 1 | 6 | 3 | 9 | 9 | 9 |
| | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | З | З | З | З | Ю-В | В | В | В | Ю-В | Ю | Ю-З | С-З | С-З | З |
| Солнце восход / заход | | 04:07 | 21:43 | | | 04:08 | 21:43 | | | 04:08 | 21:43 | | | 04:09 | 21:42 | | 04:10 | 21:42 | |
| Луна восход / заход | | 03:07 | 19:33 | | | 03:50 | 20:25 | | | 04:41 | 21:08 | | | 05:38 | 21:44 | | 06:39 | 22:13 | |

## Пĕлтерўсем. Объявления

**Вниманию представителей малого и среднего бизнеса Моргаушского района!!!**
**26 июня 2014 года в 14.00 час. в конференц-зале производственного бизнес-инкубатора с. Моргауши состоится очередное заседание совета по развитию малого и среднего предпринимательства при главе администрации Моргаушского района, с участием Иванова Владимира Николаевича, уполномоченного по защите прав предпринимателей в Чувашской Республике. Приглашаются все желающие.**

**Продаем: доски 25–50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 5-10.**

**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ. АКЦИЯ!!! Снижение цен! ТРИКОЛОР, НТВ+, ТЕЛЕКАРТА от 3000 руб. Эфирные цифровые приемники от 1200 руб. Обмен старых ресиверов на новые! Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30.** 10-10.

**БЕТОН, РАСТВОР всех марок. Доставка. Дешево. Тел.: 8-927-668-87-78. 9-43.**

**Ĕне, вăкăр, тына, пăру, сурăх туянатпăр. Тел.: 8-987-665-02-13. 1-10.**

* * *

**Кольца колодцев ж/б (замковые, простые) D-0.7:1.0:1.5, крышки, днища. Бурение индивидуальных колодцев и скважин. Доставка. Тел.: 8-902-327-82-52. 19-21.**

* * *

**Услуги мини-экскаватора. Выполняем работы по прокладке коммуникаций, копке фундамента и т. д. Ковши 60 см, 40 см, 20 см. Ширина экскаватора 1м 50 см, вес 3 т. Цена: 1000 руб/час. Выезд. Тел.: 8-987-660-83-82. 2-10.**

* * *

**Пластиковые окна и натяжные потолки. Замер и консультация бесплатно. Гарантия качества по разумным ценам. Тел.: 36-09-30, 8-927-668-81-54. 9-11.**

6-10.
компания **немецкие ОКНА И ДВЕРИ**
• замер • доставка (бесплатно)
• установка под ключ
**8(927)844-78-11**
всего от 2900 руб. кв.м.

* * *

**ПЕСОК речной, ОПГС (гравмасса), БОЙ КИРПИЧА. Доставка. Тел.: 8-927-667-68-64. 8-10.**

* * *

**Продаю дома (деревянный и кирпичный) с надворными постройками и земельным участком в с. Моргауши. Возможен обмен на квартиру. Тел.: 8-968-628-39-00, 8-905-029-21-85. 1-2.**

* * *

**Кирпич, керамблоки, колодезные кольца, цемент. Доставка. Тел.: 8-962-321-36-80. 4-4.**

* * *

**Требуются строители в Москву и в Подмосковье для отделки зданий МВД. Сварщики – 2000 руб. в день, разнорабочие – 1500 руб., отделочники – сдельно. Расценки хорошие. Питание, проживание. Тел.: 8-925-526-61-93. Валентин Борисович. 3-4.**

* * *

**В ЗАО «Моргаушский кирпичный завод» требуются работники смежных профессий, машинисты экскаватора, токарь. Оплата сдельно-премиальная, своевременная. Телефон для справок: 62-3-47. 5-6.**

* * *

**Продаю пиломатериалы, срубы 3м.х3м., 6м.х6м. в наличии и на заказ. Тел.: 8-987-579-85-90, 8-908-840-00-33. 2-5.**

* * *

**Пĕрре тата пиллĕк пăрулană чуптарнă ăратлă ĕнесене пăрушĕсемпе пĕрле сутатăп. Тел.: 8-937-954-00-18.**

* * *

**Бурение колодцев. Колодезные кольца. Доставка. Установка. Тел.: 8-927-668-96-96. 1-5.**

* * *

**Продаю трактор Т-25, 1988 года выпуска; косилку. Тел.: 8-909-305-54-21.**

* * *

**Виççĕ пăрулană хура-шурă ĕне пăрушĕпе пĕрле сутатăп. Тел.: 8-905-199-92-77.**

* * *

**Продаются: четырехкомнатная квартира в с. Моргауши с индивидуальным отоплением (или меняю на две однокомнатные квартиры); дом в д. Шупоси (Большесундырское сельское поселение) с надворными постройками; бараны. Тел.: 8-905-340-68-50.**

* * *

**Продаются: 2 коровы черного цвета, отел в январе; телята, трехмесячные, черно-белого цвета. Тел.: 8-952-025-18-07, 8-967-792-54-69.**

* * *

**Требуется пастух для выгула овец. Зарплата – 15000 руб. Питание, проживание – бесплатно. Тел.: 8-965-683-61-71.**

* * *

**Июнĕн 28-мĕшĕнче Кивĕ Матьăк ялĕ 220 çул тултарнине халалланă уяв иртет. Хăнасене яла 13 сехете йыхравлатпăр. Тел.: 8-909-304-10-85.**

Муркаш райпо коллективĕ хатĕрлев пайĕнче водительте ĕçлекен П.Н. Корчагинăн

**АМĂШĔ**

вилсе кайнă пирки çывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерў ялавĕ» хаçат**
**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин "Муркаш районĕн «Çĕнтерў ялавĕ» хаçат редакцийĕ» Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, бухгалтери - 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерўсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 24.06.2014 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 5135.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерў ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.